26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ОКТЯБРЬ 24 ВЫРСАРНИКУН 212(6449) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ***ТОЛБУХИНА***

Украинăри 4-мĕш фронтăн çарĕсем нумай кунсем хушши пынă вăйлă çапăçусем хыççăн тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, тăшмана йывăр çухатусем тÿстерсе, паян, октябрĕн 23-мĕшĕнче, **Мелитополь** хулипе чугун çул станцине—нимĕçсен кăнтăр енчи оборонин стратегиллĕ питех те паха тĕввине, Крым тата Днепр шывĕн анатри тăрăхĕ патне пымалли вырăнсене питĕрсе тăраканскерне, тытса илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсен **Молочная** шывĕ çинчи хăватлă оборона тăрăхне, танксен çулне пÿлмелли инженерла оборудовани тĕлĕшпе, çавăн пекех тата пехота, артиллери, танксем нумай пухса тăратнă тĕлĕшпе те нимĕçсен **Миус** шывĕ çинчи оборонинчен вăйлăрах пулса тăраканскерне, чи кирлĕ вырăнта татса пăрахнă.

Мелитополь хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче **Крейзер** генерал-лейтенантăн çарĕсем, **Коломиец** генерал-лейтетантăн çарĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн **Хрюкинăн** летчикĕсем тата артиллери генерал-лейтенанчĕн **Краснопевцевăн** артиллерисчĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах тата çаксем чапа тухнă: **Пашков** полковникăн 91-мĕш стрелковăй дивизийĕ, **Казарцев** генерал-майорăн 126-мĕш Горловски стрелковăй дивизийĕ, **Куропатенко** генерал-майорăн 315 стрелковăй дивизийĕ, **Сызранов** генерал-майорăн 416-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизийĕ, **Добровольский** полковникăн 118-мĕш стрелковăй дивизийĕ, **Юхимчук** генерал-майорăн 347-мĕш стрелковăй дивизийĕ, **Петрюк** полковникăн 116-мĕш çирĕплетнĕ районĕ, **Чумаченко** полковникăн 206-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, **Корягин** подполковникăн 265-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, **Ситкин** полковникăн инçене вĕçсе разведка тăвакан 8-мĕш уйрăм авиаци полкĕ, **Семенов** майорăн 76-мĕш гвардейски штурмовой авиаци полкĕ, авиаци генерал-майорĕн **Токаревăн** 1-мĕш гвардейски Сталинградски штурмовой авиаци дивизийĕ, **Горбунов** полковникăн 8-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, **Собалькин** подполковникăн 1.105-мĕш тупăллă артиллери полкĕ, **Ведут** подполковникăн 204-мĕш гвардейски гаубицăллă артиллери полкĕ, **Казачков** подполковникăн 101-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, **Костоглот** майорăн 125-мĕш минометнăй полкĕ, **Власенко** майорăн 67-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, **Барабаш** подполковникăн 22-мĕш гвардейски уйрăм танковăй полкĕ, **Павлов** полковникăн 12-мĕш инженернăй штурмовой бригади, **Ростовцев** капитанăн 121-мĕш уйрăм инженернăй батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас майпа **Мелитополь** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăçсене **„Мелитопольски“** тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăçсене çапла чĕнмелле тăвас:

91-мĕш Мелитопольски стрелковăй дивизи,
315-мĕш Мелитопольски стрелковăй дивизи,
118-мĕш Мелитопольски стрелковăй дивизи,
347-мĕш Мелитопольски стрелковăй дивизи,
116-мĕш Мелитопольски çирĕплетнĕ район,
206-мĕш Мелитопольски штурмовой авиаци дивизийĕ,
265-мĕш Мелитопольски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
8-мĕш Мелитопольски инçене вĕçсе разведка тăвакан авиаци полкĕ,

76-мĕш гвардейски Мелитопольски штурмовой авиаци полкĕ,

8-мĕш Мелитопольски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,

1.105-мĕш Мелитопольски тупăллă артиллери полкĕ,
204-мĕш гвардейски Мелитопольски гаубицăллă артиллери полкĕ,

101-мĕш Мелитопольски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

125-мĕш Мелитопольски минометнăй полк,
67-мĕш гвардейски Мелитопольски минометнăй полк,
22-мĕш гвардейски Мелитопольски танковăй полк,
12-мĕш Мелитопольски инженернăй штурмовой бригада,
121-мĕш Мелитопольски уйрăм инженернăй батальон.

126-мĕш Горловски стрелковăй дивизие, 416-мĕш Таганрогски стрелковăй дивизие, 1-мĕш гвардейски Сталинградски штурмовой авиаци дивизине, нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса иккĕмĕш **хут чапа тухнăскерсене, Хĕрлĕ Ялав** орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Нимĕçсен çирĕплетнĕ тăрăхне татса кĕнĕ чухне тата **Мелитополь** хулине ирĕке кăларнă çĕрте уйрăмах чапа тухнă боецсемпе командирсене чи пысăк награда—**Совет Союзĕн Геройĕ** ятне илме тăратас.

Паян, октябрĕн 23-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици **Мускав Мелитополь** хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене иксĕр çирĕм тăвата тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, **Мелитополь** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **тав тăватăп**

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Верхне-Днепровск хулипе чугун çул станцийĕшĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă **Федоровский** полковникăн 303-мĕш стрелковăй дивизине, **Денисенко** генерал-майорăн 36-мĕш гвардейски стрелковăй дивизине, **Котенко** подполковникăн 1008-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкне тата **Черенков** подполковникăн 523-мĕш минометнăй полкне «**Верхне-Днепровски**» тесе ят парас, малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

303-мĕш Верхне-Днепровски стрелковăй дивизи,
36-мĕш гвардейски Верхне-Днепровски стрелковăй дивизи,
1008-мĕш Верхне-Днепровски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
523-мĕш Верхне-Днепровски минометнăй полк.

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 22-мĕшĕнче МЕЛИТОПОЛЬ хулинчен çурçĕртерехри районра пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрнĕ те унăн вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—КАРАЧЕКРАК, ЭРИСТОВКА, УКРАИНКА, КАЛИНОВКА, КРЕНТАЛЬ, ЗЕЛЕНЫЙ ГАЙ, ИЛЬИНОВКА, РОЗЕНТАЛЬ, ЮРТУК, КАНАДСКИЙ, НЕЙНАССАУ, РОВНОЕ, ТРУДОЛЮБИМОВКА ятлă ялсене тытса илнĕ. МЕЛИТОПОЛЬ хулин çурçĕр пайĕнчи урамсенче вăйлă çапăçнă. Çак çапăçусенче пирĕн çарсем тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те пысăк çухатусем кÿнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçнă. Днепропетровск облаçĕнчи район центрне—ВЕРХНЕДНЕПРОВСК хулине тытса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче ЛЕЛЕКОВСКИЙ ПЕРВЫЙ, КОРСУНОВКА, ИСКРОВКА, АНДРЕЕВКА, САКСАГАЙ, ПОСУНЬКИ, ВОЛЬНЫЕ ХУТОРА, БОРОВКОВКА, ПЕТРОВКА, ЧЕРВОННОЕ, СОШИНОВКА, НОВОНИКОЛАЕВКА, МАНУИЛОВКА, АУЛЫ ятлă пысăк ялсене тата ЭРАСТОВКА, ВОЛЬНЫЕ ХУТОРА, ВЕРХНЕДНЕПРОВСК ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ПЕРЕЯСЛАВ-ХМЕЛЬНИЦКИЙ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

РЕЧИЦЫ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—ВОЗОК, РАЙСК, МИХАЛЕВКА, ГОРОДОК, ТЕСНЫ, ДЕРАЖИЧИ, НОВАЯ ЛУТАВА ятлă ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлăн разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем пур фронтсенче те нимĕçсен 116 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 98 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан поляксен дивизийĕн Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи боевой ĕçĕсем

Совет Союзĕпе Германи фрончĕн пĕр участокĕнче **Берлинг** генерал-майор командир пулса ертсе пыракан поляксен 1-мĕш корпусĕн чăçĕсем ăнăçлăн çапăçççĕ.

Совет командованийĕн боевой заданине пурнăçласа, Тадеуш Костюшка ячĕпе тăракан дивизи чăçĕсен пехотинецĕсем тата «Вестерплатте геройĕсен ячĕпе тăракан танковăй чăçăн танкисчĕсем Л. ятлă ял районĕнче нимĕç оборонине татнă та вирлĕн атакăласа, нимĕçсене темиçе ялтан çапса кăларнă. Тăшмана çынсемпе техника енчен те пысăк çухату кÿнĕ. 300 гитлеровец, вĕсен шутĕнче 13 нимĕç офицерĕ, поляксене тыткăна парăннă.

Поляксен пехоти вирлĕн наступлени туса пынине чарас тесе, тăшман пикировка тăвакан бомбардировщиксемпе йышлăн усă курать тата контратакăсем тăвать. Контратакăсене хăй тĕллĕн çÿрекен «Фердинанд» йышши тупăсемпе танксем пулăшса пыраççĕ, анчах та вĕсен контратакисем ăнăçман. Нимĕçсен пур контратакисене те вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе сирсе янă. Поляксем штык вĕççĕн пыра-пыра çапнине тата артиллери пенине гитлеровецсем чăтайман.

Поляксен разведка тăвакан подразделенийĕ çĕрле тăшман йышăннă пĕр яла кĕрсе кайнă та нимĕç пехотин батальон штабне пĕтерсе тăкнă, операцисем çинчен çырнă çырусене, картăсене тата ытти документсене те тытса илнĕ.

* * *

Мелитополь хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрнĕ те, малалла куçса пырса, нимĕçсенчен тĕреклетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Нимĕçсем, малтанхи позицисене каялла тытса илес тесе, темиçе хутчен хаяр контратакăсем тунă. Совет чăçĕсем, артиллерипе минометсенчен тата пехота хĕçпăшалĕпе персе тăрса, тăшман контратакисене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Мелитополь хулин çурçĕр пайĕнче урам хушшинче вăйлă çапăçусем пынă. Кун каçиччен нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 62 танк, 8 бронемашина, хăй тĕллĕн çÿрекен «Фердинанд» йышши 20 тупă тата темиçе артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен юсавлă 5 танк, тĕрлĕ калибрлă 19 тупă, боеприпассен темиçе складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пирĕн çарсем татса кĕнĕ тĕле тăшман танксен тата пехотăн темиçе çĕнĕ дивизине илсе пынă та вăйлăн хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. 50 яла ытла тата темиçе чугун çул станцине йышăнса илнĕ. Пĕр соединенин чăçĕсем вăйлă тĕреклетнĕ вырăнсене тытса илнĕ те Верхнеднепровск хулин çурçĕр тата хĕвелтухăç хĕррисене кĕнĕ. Çĕрле пирĕн боецсем татăклăн атакăланă та хаяр çапăçусем хыççăн Верхнеднепровск хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ. Тăшман çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем тÿснĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 38 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Переяслав-Хмельницкий хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшман, пирĕн çарсем малалла куçса пынине чарма хăтланса, контратакăна хăйĕн танковăй чăçĕсене кĕртсе янă. Пирĕн танксемпе артиллери нимĕçсен 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшман контратакине сирсе ярса, пĕр соединени боецĕсем малалла куçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Пирĕн авиаци кун каçа сывлăшра 42 хутчен çапăçнă, çав çапăçусенче нимĕçсен 22 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Речицы хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, темиçе яла тытса илнĕ. Çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр полк таран пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 21 тупă, 87 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 150 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсене пыра-пыра çапнă, 40 хир туппипе çÿлелле перекен тупа тата 100 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 31 самолетне персе ÿкернĕ

* * *

Крым районĕсенчен перинче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 4 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче тупăсем турттарса пыракан 8 платформа, боеприпассем тиенĕ 9 вагон, горючи тултарнă 12 цистерна тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 18 вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Партизансен пĕр ушкăнĕ пĕр яла пырса кĕнĕ те тăшманăн бензохранилищине вут тивертсе янă. 160 тонн бензин çунса кайнă.

* * *

Гитлерла командовани, Хĕрлĕ Çар наступленине чарса лартма хăтланса, Совет Союзĕпе Германи фронтне Хĕвеланăçĕнчен çĕнĕ чăçсем куçарса килет.

Нимĕçсен 376-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 767-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен Кременчуг хулинчен кăнтăрхĕвелтухăçнерехре тыткăна лекнĕ салтак Эрвин Флек çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизи Хĕвелтухăç фронтне çак октябрь уйăхĕн 4-мĕш числинче Голландирен çитрĕ. Пирĕн эшелон Верховцево станцинче анчĕ. Дивизие Днепрăн пĕр участокне хÿтĕлеме, тем пулсан та ăна хăй аллинчех тытса тăма хушнă».

Киевран çурçĕртерехре нимĕçсен 82-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. Çав салтаксенчен пĕри Вальтер Браун ефрейтор çапла каласа кăтартнă: «Нимĕçсен 389-мĕш пехотнăй дивизине вырăссем Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкрĕç. Ун хыççăн Францире çĕнĕ дивизи организацилерĕç, ăна та 389-мĕш дивизи тесе ят пачĕç. Эпĕ çав дивизири 545-мĕш полкăн 10-мĕш ротинче тăтăм. Иртнĕ сентябрь уйăхĕнче Российăна Францирен нумай çар куçарчĕç. Офицерсем пире çапла каларĕç: мĕнпур пехотнăй полксен 3-мĕш батальонĕсене Францирен Российăна куçарнă, терĕç. Сентябрь уйăхĕн 2-мĕш çуррине 545-мĕш полкăн 7-мĕшпе 10-мĕш ротисене маршевăй батальона кĕртрĕç те Хĕвелтухăç фронтне ячĕç. Манăн Генрих Кюлинг земляк та, 389-мĕш дивизири 544-мĕш полкра тăнăскер, Российăна çитнĕ. Эпĕ ăна Киевра тĕл пултăм. Вăл унта тепĕр маршевăй батальонпа килнĕ».

Нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи обер-ефрейтор Пауль Гильдемди, Гомель хулинчен çурçĕртерехре тыткăна лекнскер, çапла каласа панă: «Эпĕ Норвегире нимĕçсен 214-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 367-мĕш полкра тăтăм. Эпир Кристиансанд-Ставангер лини çинчи çырансене сыхлаттăмăр. 1943 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче 367-мĕш полкăн 2-мĕш батальонне васкаса судно çине лартрĕç те Данири Оргус портне илсе кайрĕç. Кунтан эпир чугун çул тăрăх Фленсбург—Штаргард—Шнейдемюль — Бромберг — Варшава—Минск—Бобруйск маршручĕпе Российăна килтĕмĕр. Бобруйскра пирĕн батальона автомашинăсем çине лартрĕç те малти позицие илсе çитерчĕç, унта пире нимĕçсен 260-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ротăсене салатрĕç».

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене илмесĕр пĕр çын та ан юлтăр

Ыран, октябрĕн 25-мĕшĕнче, укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейи пуçланать. Лотерея билечĕсене 2 миллиард та 500 миллион тенкĕлĕх кăларнă. Лотерея тăрăх пухăннă укçа-тенкĕ Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсем, вăрçă техники туса кăларассине вăйлатнă çĕре каять.

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хирĕç хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, совет халăхĕн телейĕшĕн кĕрешет. Çавăнпа та Хĕрлĕ Çаршăн тесен, совет халăхĕ нимĕн те шеллемест. Çавна эпир хамăрăн çĕршыври кашни предприяти, колхоз тата учреждени ĕçĕнче куллен кун куратпăр. Çавна эпир отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче государствăн военнăй заемĕсем тата укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейи хăвартăн та нумай саралнинче куртăмăр.

Совет халăхĕ государствăн иккĕмĕш военнăй заемне пĕр талăк хушшинче 14 миллиард та 561 миллион тенкĕлĕх сарчĕ. Вăл заема пирĕн республикăри ĕççыннисем те пысăк хаваслăхпа çырăнса илчĕç. Заема вăл тухнă кунах 118 миллион тенкĕлĕх сарнă, заем укçине 64 миллион тенкĕ çийĕнчех тÿленĕ. Укçапа япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене пирĕн республикăри ĕççыннисем кĕске вăхăтрах 16 миллион тенкĕлĕх сарнă. Çĕршер колхозниксем, рабочисемпе служащисем лотерея билечĕсене пиншер тенкĕлĕх е ытларах туяннă.

Тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатас тесен пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсем тата вăрçă техники ытларах та ытларах парса пымалла. Патриотла туйăмпа çĕкленнĕ совет ĕççыннийĕсем фронта пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Иккĕленмелли çук, совет халăхĕ укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине сарнă чухне те хăйĕн активлăхне пысăккăн кăтартса парĕ.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерея билечĕсене туянни ĕççыннисемшĕн те усăллă. Лотерея билечĕсене илекенсем укçа тата япаласем выляса илме пултараççĕ. Лотерейăра пурĕ 2.500 пин выляв пулать. Ку хисепре 2.437.200 билет çине укçа тата 62.800 билет çине япаласем тухаççĕ.

Укçапа япаласен лотерея билечĕсене сарас ĕçе хăвăрт ирттермелле тăвас тесен, пирĕн ĕççыннисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх организацилес пулать. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисене тата колхозниксемпе колхозницăсене укçапа япаласен лотерейи мĕншĕн кирлĕ пулнине, лотерея билечĕсене илмелли йĕркесене ăнлантарса памалла. Ку ĕçе тума перекет кассисене пулăшакан комиссисене тата актива анлăн явăçтарас пулать. Массăллă агитаци ĕçне лотерея билечĕсене кашни рабочи тата служащи хăйĕн уйăхри ĕçукçи хисепĕнчен 10 процентран кая мар çырăнтарса илтерес, билет укçине çийĕнчех е 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен тÿлесе татмалла тăвас тĕллевпе организацилемелле.

Партипе комсомол тата совет организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче лотерея билечĕсене сарасси çине хытă çавăрăнса пăхас пулать. Кашни колхозникпа колхозница лотерея билетне туянма пултартăр.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерея билечĕсене хăвăрт сарса, хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатма пулăшар! Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерея билечĕсене илмесĕр пĕр çын та ан юлтăр!

Горький хулинче Минин памятникне лартаççĕ

Горький хулинче вырăс халăхĕн аслă патриочĕн Кузьма Мининăн памаятникне тума пуçланă.

Памятник çапла пулать: çÿллĕ чул çинче пĕтĕм пĕвĕпе Минин тăрать, вăл, аллине тăсса, Чулхула ополченецĕсене Мускава ют çĕршыв çарĕсенчен тасатма кайма чĕнет.

Памятнике Октябрь уявĕ 26 çул тултарнă çĕре уçма палăртнă. (ТАСС).

Кăçалхи сахăр кăшманĕнчен тунă сахăр

Узбекистанри сахăр завочĕсем кăçалхи кăшманран пин тонна сахăр туса кăларнă. Çав предприятисен хатĕрлев пункчĕсене республикăри колхозсем 700.000 центнер кăшман леççсе панă ĕнтĕ. Халĕ те леçеççĕ. (ТАСС)

ЯЛХУÇАЛАХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

ВЫЛЬĂХСЕНЕ ХĔЛ КАÇАРМА ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕНЧĔÇ

КАЛИНИНО. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем фронтпа тăван çĕршыва пысăк пулăшу парас шухăш-кăмăлпа кăçал нихăш çулхинчен те тухăçлăрах ĕçлерĕç. 324 гектар тырра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртсе, октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне çапса пĕтерчĕç. Государствăна 800 центнер чи малтан çапнă шултăра та таса тырă леçсе пачĕç. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене те срокчен парса татрĕç.

Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче пысăк çĕнтерÿсем туса пынипе хавасланса, колхозниксем государствăна 1944-мĕш çулшăн аванс шучĕпе тырă, аш-какай пама тытăнчĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех колхоз государствăна килес çулшăн 22 центнер тырă, 27 центнер аш-какай, 2.115 çăмарта пачĕ.

Çавăн пекех колхозра кăçал вырльăхсем валли çĕнĕ витесем туса лартрĕç, киввисене тĕплĕн юсаса, ăшă тытмалла турĕç. Октябрь уйăхĕнчен пуçласа май уйăхне çитиччен выльăхсене тутă тăрантарса усрамалăх апат-çимĕç хатĕрлесе хунă, вĕсене фермăсен заведующийĕпе старши конюха актсемпе çирĕплетсе панă.

Б. ШОРНИКОВ.

„Костер“ колхоз фермисенче

ИЕПРЕÇ. Районра колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесси пырать. Нумай пулмасть «Костер» колхозăн фермисене тĕрĕсленĕ. Унта выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Выльăх витисене юсаса ăшăтнă. Сысна ферминче сысна çурисене усрама ятарласа пÿлĕмсем уйăрнă, унтах кăмака тунă. Чăх-чĕпсем валли уйрăм çурт лартнă. Колхозницăсем тăрăшса ĕçленипе кăçал хурт-хăмăр вĕллисем лартма çурт тунă. Унта 120 вĕлле вырнаçать.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхассине те лайăх организациленĕ. Фермăсен заведующийĕ О. Иванова юлташ тăрăшнипе кăçал октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă. Лайăх пăхса усранипе выльăх-чĕрлĕх продуктивносĕ ÿснĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне фермăри кашни ĕнерен 750 литр сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран 4 килограмм та 800 грамм çăм каснă.

Халĕ фермăра ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем çитес çулта татăх та ытларах сĕт-çу, çăм, çăмарта илме условисем хатĕрлессишĕн тăрăшаççĕ.

П. КУРАКОВ.

Кĕрхи çĕртмене планран ирттерсе тăваççĕ

ВĂРНАР, октябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем пурте октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕç. Халĕ пĕтĕм вăйпа кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Ĕçрен пушаннă лашасем, çавăн пекех тракторсем те, йăлтах кĕрхи çĕртмере. «Авруй», Каганович ячĕпе тăракан, «Малоцивиль», «Майăн 1-мĕшĕ», пурĕ 14 колхоз, районра кĕрхи çĕртме тумалли плана ирттерсе тултарчĕç.

Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз (председателĕ Васильев) кĕрхи çĕртмене планран ирттерсе 100 гектар çухаласа хăварать.

Е. ВОЛКОВ.

Район центрĕнчи колхозра хуçа çук

ТĂВАЙ. Шмидт ячĕпе тăракан колхозăн ĕçĕсемпе Тăвай райсовечĕн исполкомĕ мар, ялсовечĕ те кирлĕ пек интересленмест. Ĕçсене йĕркелесе пыман пирки кунта дисциплина япăхса кайнă. Çавна пула ĕнтĕ районри организацисемпе юнашар ларакан колхозах япăх ĕлет, районна каялла туртать.

Ĕç дисциплинине пăхăнмасăр, ĕçсĕр суллланса çÿрекен çынсене кунта хÿтĕлеççĕ. Вăйпитти хĕрарăмсемех, пăлахая персе, ĕçе тухмасăр лараççĕ. Акă, М. Волкова кăçал мĕн пурĕ те 7 ĕçкунĕ çеç тунă. Евдокия Зайцева колхозница пĕр ĕçкунĕ те туман, Валентина Волкова 6 ĕçкунĕ çеç тунă. Çакăн пек тĕслĕхсем татăх та пур. Анчах ялхуçалăх уставĕн тĕп законне пăсакансене кунта пĕрне те тивĕçлипе ответ тыттарман. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Михайлова юлташ вĕсемпе килĕшет пулас.

Шмидт ячĕпе тăракан колхоза районри организацисем те пулăшман. Ку колхоз вырса пухнă тырпулăн 60—65 процентне çеç çапнă-ха. Кĕрхи çĕртме 316 гектар тумалла, халĕ 116 гектар çеç сухаланă. Çапах та колхозра ĕç кунĕ ирхине 9—10 сехетсенче çеç пуçланать, кăçхине ĕçлемеççĕ. Комбайн талăкра 5—6 сехет хушши çеç ĕçлет. Тырра алăпа пачах çапмаççĕ. Ĕçрен пушă лашасем нумай пулсан та, вĕсемпе кĕрхи çĕртме тумаççĕ, ĕçлеме ÿркенеççĕ.

А. КАХОВСКИЙ.

Вăрçă инваличĕсем ĕçре

СОВЕТСКОЕ. Мăн Явăшри Сталин ячĕпе тăракан колхоз вăрçă инваличĕсене пурне те ĕçе вырнаçтарса пырать. Фронтовик В. Петров халĕ колхозра учетчик-кассир пулса ĕçлет. Вăл ĕçе тытăниччен кунта учет ĕçĕ питĕ япăх пулнă. Ĕçкунĕсене тĕрĕс çырса пыман, колхозниксене хăйсен ĕçкунĕсем çинчен вăхăтра пĕлтерсе тăман. Халĕ ĕç чылай лайăхланчĕ. Петров юлташ çав вăхăтрах тулли мар вăтам шкулта военрук пулса ĕçлет. Унăн ĕçĕ унта та лайăх пырать.

Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕç тивĕçлĕ вырăнта тăман. Вăрçă инваличĕ М. Смирнов вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме тытăннăранпа ĕç пачах урăхланчĕ. Халĕ ĕнтĕ стена хаçачĕсем те вăхăтра тухса тăраççĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатнă май, колхозра ĕç тухăçлăхĕ ÿсни палăрать. Колхозниксем çак кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Ĕçе вырнаçтарнă вăрçă инваличĕсем кунта татăх та пур. А. Демидов —колхоз счетоводĕ, вăлах шкулти военрук, Н. Михайлов—аслă конюх, Ф. Димитриев—вăрманпа уй хуралçи т. ыт. те. Вĕсем пурте фронта пулăшас кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Вăрçă инваличĕсене ĕçе вырнаçтарнипе пĕрлех, колхоз Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе рядовойĕсене ăшă япаласем парса пулăшать. Халĕ колхозниксем 8 килограмм çăм, 687 тенкĕ укçа, портянкăсемпе алшишисем т. ыт. те пухнă.

Н. ПАХОМОВ.

Малта пыракансен опычĕпе ĕçлемелле

Етĕрне районĕнчи нумай ялсовечĕсенче финагентсем укçа-тенкĕ пухас плана ирттерсе тултараççĕ. Никольск ялсоветĕнчи финагент Мельникова юлташ колхозниксем патĕнче час-часах пулать, укçа-тенкĕ вăхăтра тÿлени фронтпа çĕршывшăн пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса парать. Колхозниксем хăйсен укçа-тенкĕ парăмĕсене çийĕнчех тÿлесе татаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Никольск ялсовечĕ виççĕмĕш кварталти плана 180 процент тултарчĕ. Октябрь уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче 21 пин тенкĕ пухнă. Мельникова юлташ Октябрь уявĕ тĕлне çулталăкри плана 105 процент тултарма пулчĕ. Çавăн пекех Полянка ялсовечĕ те (финагент Скребкова) III-мĕш кварталри плана 157 процент, Мăн Хăмаркка ялсовечĕ 160 процент, Стрелецк ялсовечĕ 125 процент тултарчĕç.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, район укçа-тенкĕ пухас енĕпе юлса пырать-ха. Иртнĕ квартал планне 86 процент кăна тултарнă. Кăкшăм ялсовечĕ 163.740 тенкĕ пухас вырăнне 57.700 тенкĕ кăна пухнă. Ку ялсоветĕнчи финагент Адамов юлташ хăшпĕр куки ялсоветне те пырса курăнмасть, колхозниксем патĕнче вара пачах пулман. Чагаша, Мăн Сĕнтĕр ялсоветĕсем те юлса пыраççĕ.

А. КРАСНОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Октябрьти плана ирттерсе тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). «Большевик» завод коллективĕ çак уйăхра производство планне кунсеренех ирттерсе тултарать. Çапла вăл плана октябрĕн 18-мĕшĕнче 145 процент, 19-мĕшĕнче 116 процент, 20-мĕшĕнче 143 процент, 22-мĕшĕнче 136 процент тултарнă. Çакăн пек ĕçленипе завод коллективĕ октябрьти плана 23 кун хушшинче 111,4 процент тултарчĕ.

Завод коллективĕ хăйĕн умне октябрь уйăхĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илес задача лартрĕ. Халĕ кашни рабочи, работница, инженер, техник тата служащи çав задачăна пурнăçа кĕртесшĕн тăрăшса ĕçлет.

ПАВЛОВА,
Завком председателĕ.

Ăмăртура мала тухнă райпромкомбинатра

ИШЛЕЙ, октябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Райпромкомбинат коллективĕ сентябрь уйăхĕнчи производство планне 143 процент тултарчĕ. Çапла вăл, вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче малти вырăна тухса, пĕрремĕш премине — 10.000 тенкĕ укçа илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура райпромкомбинатри çăматă йăвалакан мастерской мала пырать. Вăл виççĕмĕш кварталти плана 144 процент тултарнă. Мастерскойĕнчи нумай рабочисем хăйсен планне ирттерсе тултараççĕ. Çапла, Беднягин, Синельников юлташсем нормăна кашни кунах 150-шар процент тултараççĕ. Куршак-чÿлмек тăвакан тата атă-пушмак юсакан цехсем те тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Халĕ райпромкомбинат коллективĕ çулталăкри плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне 120 процент тултарассишĕн кĕрешет.

А. ТОЛСТОВ

Чугун çулсене хĕле хатĕрлеççĕ

Хусан чугун çулĕ çинче ĕçлекен работниксем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçне лайăхлатсах пыраççĕ. Нумай станцисен коллективĕсем чугун çулсене хĕле хатĕрлесе çитерчĕ. Çапла, Вăрнар станцийĕн коллективĕ пурăнмалли çуртйĕрсене, стрелкăсемпе чугун çул линийĕсене хĕле хатĕрлесе çитерчĕ. Нумай пулмасть, станци коллективĕ хĕле хатĕрленсе çитни çинчен социализмлă паспорт илчĕ.

Шупашкар станцинчи работниксем те хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе нумай ĕç тунă. Кунта хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхсене пĕтĕмпех тĕплĕн шута илнĕ. Иртнĕ çулта шыв паракан станци йĕркеллĕ ĕçлеймен. Кăçал ăна тĕплĕн юсанă. Халĕ шыв паракан станци хĕллехи вăхăтра йĕркеллĕн ĕçлеме хатĕр. Станцири çулсене тата çуртсене юсас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене те çак кунсенчех туса çитереççĕ.

(Хамăр инфор).

Комсомол 25 çул тултарас умĕн

1943-мĕш çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче 56-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизири 254-мĕш Гвардейски стрелковăй полкри рядовой Александр Матвеевич **Матросов** нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе Чернушки ялĕшĕн татăклăн çапăçнă вăхăтра тăшман дзочĕ патне йăпшăнса пынă та амбразурăна хăйĕн ÿчĕпе хупласа хунă. Вăл вилнĕ, анчах хăйĕн вилĕмĕпе вăл малалла тапăнса пыракан подразделение ăнăçу тума май панă.

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943-мĕш çулхи июнĕн 19-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, гварди рядовойне Матросов юлташа вăл вилнĕ хыççăн Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Паттăр вилĕмпе вилнĕ Александр Матросовăн ятне ĕмĕрлĕхе асра тытмалла тăвас тесе, Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хăйĕн приказĕпе 56-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизири 254-мĕш Гвардейски стрелковăй полка çапла чĕнмелле тунă: «Александр Матросов ячĕпе тăракан 254-мĕш Гвардейски стрелковăй полк». Александр **Матросова** Александр Матросов ячĕпе тăракан 254-мĕш Гвардейски полкăн 1-мĕш ротинчи боецсен списокне ĕмĕрлĕхе çырса хунă.

Ÿкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ — гварди рядовойĕ Александр Матвеевич **Матросов.**

Уява кĕтсе илме хатĕр

Эпир, Шупашкарти макарон фабрикинчи комсомолецсемпе çамрăксем, ВЛКСМ 25 çул тултарнă уява кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Çак кунсенче ятарласах художествăллă пултарулăх кружокĕ турăмăр. Халĕ унта ташă-юрăсем, сăвăсемпе частушкăсем хатĕрлеççĕ. Уяв ячĕпе фронтовиксене парнесем ярса патăмăр. Уявччен 15 çамрăка ПВХО значокĕн нормисене пама, 5 çамрăка комсомола кĕме хатĕрлетпĕр.

Çавăнпа пĕрлех комсомолецсем рабочисен общежитине ăшă, таса, юсавлă тăвас тесе тăрăшса ĕçлерĕç. Халĕ общежитин кăмакисемпе чÿречисене юсанă, стенисене шуратнă, хĕлле хутма вутă хатĕрленĕ. Комсомолецсенчен тасалăх комиссийĕ уйăрнă. Вăл общежитири тасалăха сăнаса тăрать.

З. БЕЛОВА,
ВЛКСМ организацин секретарĕ.

Кончанск ялĕнчи выставка

Ленинград облаçĕнчи Боровичи районĕнчи Кончанск ялĕнче, вырăссен аслă полководецĕ А. В. Суворов нумай çул пурăннă ялта, выставка уçăлать. Хĕрлĕ Çарăн историллĕ артиллери музейĕ ун валли интереслă япаласем чылай ярса панă. Вĕсем хушшинче Суворов вăхăтĕнчи вутчулĕпе тивертсе пенĕ пăшалсем пистолетсем, полководецăн кинжалĕсем т. ыт. те пур.

Кончанскри музейре Ленинградри художниксен отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ÿкернĕ картинисем, плакачĕсем, карикатурисем пулаççĕ. (ТАСС).

ПИРĔН АВИАЦИ ЗНАМЕНКА ТАТА ФАСТОВ ЧУГУН ÇУЛ ТЕВВИСЕНЕ ТАПĂННИ

Октябрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем нимĕçсен Знаменка, Фастов чугун çул тĕввисенче пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Знаменка чугун çул тĕввинче пушарсем нумай тухнă. Тăшманăн çар хатĕрĕсем тиенĕ вагонсемпе платформисем çуннă. Пушарсенче взрывсем пулнă.

Фастов чугун çул тĕввинче бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнĕ те, виçĕ поезд çĕмĕрĕлсе кайнă. Çав тĕввĕн çурçĕр пайĕнче питĕ вăйлă взрыв пулнă, вара чугун çул çинчи эшелонсем хушшинче тата тăшманăн çар склачĕсен районĕнче пушарсем тухнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

США-ра Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăха çирĕплетес пирки пухăнакан конгреса хатĕрленеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх пирки ĕçлекен национальнăй совет» Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе конгресс пухма тата пĕтĕм Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пухусем туса ирттерме хатĕрленет. Çавна США-н паллă деятелĕсемпе организацийĕсем ырлаççĕ. Çав конгресс вăл ноябрĕн 6-мĕш, 7-мĕш тата 8-мĕш кунĕсенче ĕçлемелле.

Америкăри чи пысăк музейсенчен пĕри—Нью-Йоркри «Метрополитен» ятлă музей ноябрĕн 4-мĕшĕнче совет фотоÿкерчĕкĕсемпе вăрçă плакачĕсен выставки уçăлассипе çинчен пĕлтернĕ.

Америкăри нумай ученăйĕсем совет наукипе техникине сăнаса вĕренес тĕлĕшпе пухăнакан научнăй сессисенче пулаççĕ.

«Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх пирки ĕçлекен совет» вырăнсенчи отделенийĕсем СССР Союзĕпе США хушшинче дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлани вунă çул тултарнă ятпа США-ри 45 хулара пухусем туса ирттереççĕ. Бостон, Филадельфи, Детройт, Кливленд, Чикаго, Лос-Анжелос тата Сан-Франциско хулисенче массăллă митингсем пулса иртеççĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем хăйсем тытса илнĕ позицисене тĕреклетеççĕ. Вĕсен патрулĕсем çаплах активлăн ĕçлеççĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕ çаплах çурçĕр-хĕвеланăçнелле куçса пынă. Тăшман контратакăсем тунă, анчах американецсем вĕсене пурне те сирсе янă. Тăшманăн хыçалта пыракан чаçĕсем хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Каялла чакнă чух тăшман нумай япалана çĕмĕрсе хăварать. Союзниксен çарĕсем Пьедимонте тата Алифе пункчĕсене тытса илнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИТАЛИРЕ ТИСКЕР ĔÇСЕМ ТĂВАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Неапольри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Каяццо хулинчен (Вольтурно шывĕнчен çурçĕртерехре) тухса кайиччен гитлеровецсем хулана çаратса пĕтернĕ те йăлтах çунтарса янă. Гитлеровецсем хăйсен пурлăхне çаратмашкăн чарма хăтланнă италянецсене çемьи-çемьипе, вĕсен шутĕнче хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене те, вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Хулана союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕнĕ американец корреспонденчĕсем хула урамĕсенче гитлеровецсем вĕлернĕ мирлĕ граждансен виллисене хăйсен куçĕсемпе курнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Америка авиацийĕ Францири Эвре-Фовилль аэродромне тапăннă.

Октябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировщикĕсем тăшманăн Родос утравĕ çинчи аэродромне атакăланă. Бомбăсем вĕçсе хăпармалли çулсене тата анса лармалли вырăнсене сиенленĕ.

Союзниксен самолечĕсем Окопле хулинчи (Югослави) сортировочнăй станцисене тапăннă. Депона тата паровозсене бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивни паллă пулнă.

Румыни халăхĕ инкеленсе, хăраса пурăнать

РУМЫНИ ХАÇАЧĔСЕМ ЙЫШĂННИ

СТАМБУЛ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем Румыни халăхĕн çĕнтерес шанчăка çухатма тата хăраса ÿкме кирлĕ марри çинчен калакан статьясем нумай пичетлеççĕ. «Эпир вăрçа хутшăнтăмăр пулсан,—тесе çырать «Аргус» хаçат,—çĕнтерÿ пирĕн те пулассине шанса тăма тивĕç. Çакăн пек шанса тăмасан, фронтпа тыл вăхăтсăр арканса кайма пултараççĕ»,—тет.

Румынире тухса тăракан хаçатсенчи статьясене пăхсан, халăх çĕнтерĕве шанни хавшанăçемĕн хавшаса пырать. Бухарестра тухса тăракан «Капитала» ятлă хаçат румынсене «вырăнсăр ыйтусем» параççĕ тата ытлашши калаçаççĕ, тесе вăрçать. «Германи çĕнтерессине шанманнине сутăнчăкла ĕç çине, пăхнă пек пăхмалла», тесе хăратать.

«Курентул» ятлă хаçат çапла çырать: «этем нервине нихăçан та хальхи пек йывăр килменччĕ-ха. Малашнехи пурнăç нихăçан та хальхи пек хăрушлăн курăнса тăманччĕ-ха», тет. «Рим империйĕ вăхăтĕнчи пек, информаци пулман пулсан, çакна тÿссе ирттерме çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ»,—тесе çырать хаçат.—Анчах халь «радио саракан станцисем пурте çĕнĕ хыпарсем сараççĕ, халăх ăна итленипе хăраса, катастрофа пуласса кĕтсе пурăнать. Çакăн пек кĕтсе пурăнни бомбăсем питĕ нумай пăрахнинчен те хăрушăрах», тет.

Статья авторĕ малалла çапла çырать: «Румыни халăхĕ хĕвелтухăç фронтĕнчен килекен хыпарсене пула хытă иккĕленет, ют çĕршывсем паракан хыпарсене итлет, Румыни пурнăçне ăнланаймасть», тет. Статья юлашкинчен влаçсене халăх хăйне хăй мĕнле тыткаланине хытă асăрхаса тăма чĕнет.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Лондонра çапла пĕлтернĕ: октябрĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн йышлă мар самолечĕсем Суссекс тата Кент районĕсенче Англи çине вĕçсе тухнă. Темиçе самолет Лондон районĕ тĕлĕнчен вĕçсе кайнă. Темиçе тĕлте бомба пăрахнă. Çав бомбăсем сиен кÿнĕ. Виллисемпе аманнисем нумай мар.

ТЕАТР

Паян театрăн хĕллехи сезонне уçатпăр

Паян Чăвашсен Государство Академи театрĕ, В. Шекспир çырнă «Отелло» трагедие лартса, хăйĕн хĕллехи сезонне уçать.

Отелло рольне Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов, Яго рольне—Чăваш республикин халăх артисчĕ Б. А. Алексеев, Дездемона рольне — артистка Р. И. Ананьева выляççĕ.

Ку сезонра лартма, иртнĕ çулсенче кăтартнă «Нарспи», «Чакка», «Лиза Короткова» спектакльсемсĕр пуçне, А. Островский çырнă «Вăрман», «Воспитанница» пьесăсене, Кащпа Ржешевский çырнă «Олеко Дундич», Ф. Павловăн «Ялта», Кăлганăн «Анисса», Грибоедовăн «Горе от ума» (Хузангай куçарнă) тата урăх çĕнĕ спектакльсем хатĕрлетпĕр.

Островскин «Вăрман» пьесипе театр РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕ ирттерекен смотра хутшăнать. Спектакльте Гурмыжская помещица рольне Р. И. Ананьева, Несчастливцев-трагикăн ролĕнче—Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов, Счастливцев-комик ролĕнче—ЧАССР халăх артисчĕ Б. А. Алексеев, Аксюша — А. Н. Васильева, А. А. Долгова артисткăсем, Улита—ЧАССР тава тивĕçлĕ артистки Т. И. Петрова, Петр — ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. К. Ургалкин, Восмибратов — ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Л. Ф. Семенов, Карп рольне И. И. Илларионов артист выляççĕ. Спектакле ЧАССР искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман хатĕрлет.

«Воспитанница» спектакле çамрăк артистсене е халиччен классиксен пьесисенче пысăк рольсенчех вылямана юлташсене палăртас енĕпе лартатпăр. Спектакле театрăн художествăллă руководителĕ ертсе пынипе В. П. Фролов хатĕрлет.

Ку сезонра «Олеко Дундич» спектакле хатĕрлесси уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Олеко Дундич—граждан вăрçин геройĕ, сербсен çарĕн офицерĕ, кайран революциене куçса, Пĕрремĕш утлă Çарти пĕр эскадронăн командирĕ пулать. Дундич—хăйĕн геройла тата нумай хĕн-хур тÿсекен тăван Серби çĕршывне калама çук хытă юратать. Вырăс революцийĕнче — вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхне курать. Росси унăн иккĕмĕш тăван çĕршывĕ пулса тăрать. Тĕрлĕ оккупантсене çĕмĕрсе тăкса, пусмăртан тухассишĕн, революцишĕн хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешет. Пĕрремĕш утлă Çарта Олеко тĕлĕнмелле йывăр операцисенче пулса, хăйĕн паттăр ĕçĕсемпе чапа тухать.

«Олеко Дундич» тăшмана хăварграх аркатса тăкма чĕнекен патриотла спектакль пулмалла.

Спектакльре Олеко Дундичсăр пуçне Ворошилов, Буденный, орджоникидзе юлташсене кăтартасси театршăн паха та ответлă ĕç пулса тăрать.

Ку сезонра театр Ф. Павловăн «Ялта» пьесине лартассине те пысăк вырăна хурать. Кăçал «Ялта» пьесăна халиччен лартнă пек «юсанă» вариантпа мар, Ф. Павлов хăй çырнă вариантпа лартас тетпĕр. Спектакле Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ тата оркестр хутшăнмалла.

Çÿлте асăннă пьесăсемсĕр пуçне, театр валли Максимов-Кошкинский драматург пирĕн паттăр земляк Совет Союз Геройĕ Ф. Н. Орлов çинчен тата чăваш искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман «Эсĕ фронта мĕнле пулăшрăн» темăпа çĕнĕ пьесăсем çыраççĕ. Ку пьесăсене те кăçалхи сезонрах кăтартмалла.

Сăмах майĕн çакна калас пулать: чăваш писателĕсем театр валли пьесăсем çырас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ-ха. Театр репертуарĕнче чăвашсен вăрçă кунĕсенчи геройла ĕçĕсене кăтартакан пьесăсем питĕ сахал. Ку енĕпе Чăваш писателĕсен Союзĕ çителĕксĕр ĕçлет. Чăваш писателĕсен Союзĕпе Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн драматургсене ĕçлеме лайăх условисем туса парассишĕн те ытларах тăрăшмалла.

Театр коллективĕ умĕнче кăçалхи сезонра пысăк та паха ĕçсем тăраççĕ. Коллектив, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, халăха лайăх спектакльсем кăтартма ĕмĕтленет.

Л. Н. РОДИОНОВ,
Чăвашсен Государство Академи театрĕн художествăллă руководителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
октябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасĕлă илемлĕ
САЛАВАТ ЮЛАЕВ
ятлă фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Канашри тата Вăрнарти кайăк-кĕшĕкпе çăмарта комбиначĕсенче ĕçлеме старши бухгалтерсем кирлĕ.
Хватер пур.
Çак адрессемпе ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз, отдел кадров; 2) гор. Канаш, яично-птичный комбинат: 3) пос. Вурнары, Яично-птичный комбинат. 2—1

Çак октябрь уйăхĕн 5-мĕш числинче Атăлăн сулахай енче 57-мĕш кварталтан ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Паллисем çапла: ячĕ — „Лещь“, 1922 çулта çуралнă, тĕсĕ — турă, çамки çине çăлтăр, малти сулахай ури çинче çăмлă шурă пăнчăсем пур, çÿллĕшĕ — 1,3 метр.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Ишлейский район, Правлению Анаткас-Марковского колхоза „Правда“.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1140. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л.